К 84.09(=чув)
С 30
21411-чув



Юрий Семёнов

# ШЕТМӖ ШЫВӖ

Национальная библиотека ЧР
4-021411

*Юрий Семёнов*

# ШЕТМĔ ШЫВĔ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1977

С(чув.)2

С 30 **Семёнов Ю. С.**

Шетмĕ шывĕ. Сăвăсем. Чăваш кĕнеке издательстви, 1977.

Шетмĕ Çавала юхса кĕрет, Çавал — Атăла... Мăнаçлă Атăл хăйĕн юпписен хăвачĕпе аслă юханшыв пулса тăнинче поэт пурнăçăн вĕçĕмсĕр аталанăвне курать, сăвви-юрринче хальхи çамрăксен хастар ĕçĕ-хĕлĕпе кĕрешĕвĕ, таса шухăш-кăмăлĕ, туслăхĕпе юратăвĕ çинчен сырать.

ПРОВЕРЕНО
20ю 21 СЕН 2017

21411-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

С $\frac{0743-010}{М 136(03)-77}$ —76—77

©Чăваш кĕнеке издательстви, 1977 ç.



# ÇĔР ÇЫННИСЕМ

## *УЛĂПСЕМ ПУРНАÇÇĔ РАÇÇЕЙРЕ*

Улăпсем пурнаççĕ Раççейре,
Утăмлаççĕ улăпла çĕре.
Телей хыççăн аякка каймаççĕ,
Хăйсемех сунтал çинче туптаççĕ,—
Улăпсем пурнаççĕ Раççейре.

Улăпсем пурнаççĕ Раççейре,
Юратаççĕ-çке уя-хире:
Пирĕншĕн тăпра вăл — ылтăн, теççĕ,
Çил уçми тырпулă ӳстереççĕ,—
Улăпсем пурнаççĕ Раççейре.

Улăпсем пурнаççĕ Раççейре,
Қанăçсăр чунсем ялан ĕçре:
Чул тăва ним мар ишсе тăкаççĕ,
Çитмĕл çичĕ ыр тупра тупаççĕ,—
Улăпсем пурнаççĕ Раççейре.

Улăпсем пурнаççĕ Раççейре,
Пĕр тăванлă, туслă çемьере.
Ырă çыншăн — кĕрекийĕ хатĕр,
Қам хĕçпе килет — пуçне çухатĕ,—
Улăпсем пурнаççĕ Раççейре.

## *АСЛĂ ÇАВРĂНУ*

Ишет, ишет кунçул карапĕ,
Тăхтасчĕ унăн кăшт кăна.
Анчах самантлăх та чараймĕ
Ни паттăр, ни ăсчах ăна.

Савни савни патне çитесшĕн,
Чĕкеç вĕçет хăй йăвине,
Ӳкет патвар юман-кĕрешĕн
Çавра йĕкелĕ çĕр çине.

Ӳкин — ӳкет, килсессĕн курăн:
Шăпах çав вырăнта кайран
Çĕкленĕ пиççĕн те маттуррăн
Виç ĕмĕре çитес юман.

Аталану — тивлетлĕ куçăм!
Малтан — мала, тĕлрен — тĕле
Эпир утатпăр парти хыççăн
Сулмаклă утăмсемпеле.

Пĕр шутлă тус пек ăсататпăр
Çула тухан çулталăка.
Пуçа тайса яри уçатпăр
Ĕçчен çынсемшĕн алăка.

Ĕç ассинчен аслийĕ тăвĕ,
Вĕçмешкĕн парĕ ик çунат.
Ĕçре кăна руда сăрт-тăвĕ
Машин пулса чупас хăват.

Ĕçпех тăванлă уявсемĕр:
Плана тултартăн — ирт шала.

Шăрттан шăршиллĕ кĕрекемĕр
Чыслать, сăйлать ăста алла.

Чун хĕлхемне ахаль вĕçтермĕ
Çак чăнлăха пĕле тăран,
Умри çут ĕмĕте сӳнтермĕ,
Нихçан та юлмĕ пурнăçран.

Туссем! Кунçул карапĕ иштĕр
Пĕр чарăнмасăр малалла:
Чăн-чăн матрос çич тăвăл витĕр
Пуçне усмасăр тухмалла.

Ишер, васкар! Кивви кивелтĕр,
Çĕнни çĕнтертĕр,— ак саккун!
Кĕрешӳре телей пиллетĕр
Çĕн çул пире кун хыççăн кун.

## *ĂСАТУ*

Кирле мучи — ят-сумлă вата
Çавалкасси таврашĕнче.
Тултарчĕ сакăрвун тăваттă
Кăра кăрлачăн вĕçĕнче.

Сахал-и вăрçăра çӳренĕ
Хĕçпăшалпа хастар чăваш.
Деникин эшкерне йĕрленĕ,
Çапăçура пулман йăваш.

Кайран шур упалла вăл шунă
Ылханлă Маннергейм енне.
Партизанра чухне тĕп тунă
Минскра фашист офицерне.

Киле килсен вара тыттарчĕç
Тăван колхоз тилхепине.
Паллах, ăна вăл карăнтарчĕ,
Кăштах хытарчĕ йĕркине.

Эртел шучĕпеле вĕрентрĕ
Шупашкарта вăл Тимĕре.
«Хуçи пĕлӳллĕ кирлĕ,—терĕ,—
Ку яхăнта уя-хире».

Вара тăварăнчĕ саккунлăн,
Лава вунпилĕк çул туртсан.
Çавах ăна ахаль, ун-кунăн
Çӳренине никам курман.

Вăл сад лартас ĕçе ăнтарчĕ
Çырма çатраллă вырăнта.

Халь пăх та кур — ăста утарçă,
Районĕпех мучи малта!

Улми-çырли те пур ялйышăн,
Симпыл аса килсен — тутан.
Мĕскер пурри — Тăван çĕршывшăн,
Çĕршыв пуян-тăк — эс пуян.

Еткерĕ — председатель Тимĕр
Съезда тухса каяс кунне
Кирле мучи куç хĕсрĕ: «Чимĕр,
Кĕçех эп»,— терĕ килйышне.

Уявлăн тăхăнчĕ, тумланчĕ,
Тирпейлĕн çакрĕ орденне.
Калуш йĕрри туса уттарчĕ
Ик хутлă пысăк çурт енне.

Ĕçрисемпе сывпуллашатчĕ,
Темскер хушатчĕ делегат.
Мучи: «Тăхта кăштах, Иванччă,—
Тесе тир çĕлĕкне хыват.

— Ятран çитерччĕ,— тет,— тăванăм,
Салам юратнă Мускава.
Мавзолее пуç тай: ăнланĕ
Ильич чунран килен тава.

Эс сасăла хăюллăн, танлăн
Коммунистсен мандачĕпе.
Малашĕ пултăр çĕнĕ планăн
Хĕвеллĕ ĕмĕт пек чипер!

Çĕр çийĕн мир шевли вылятăр,
Пӳлер вут-çулăмăн çулне!

Пиртен мĕскер килет — тăватпăр,—
Кала съездри юлташсене».

— Пĕлтерĕп,— терĕ председатель,—
Ыр сăмахна, мучи, тавах!
...Çич яллă «Шуçăм» делегачĕ
Çапла ăсанчĕ Мускава.

## *ÇУ УЙĂХĔН ПĔРРЕМĔШ КУНĔ*

Салам, салам, çуралнă ялăм!
Урамусен ытамĕнче
Тăвансемпе пĕрле юрларăм
Хĕвеллĕ май уявĕнче.

Капмар çуртсем пăхса лараççĕ
Кăвак чӳречисемпелен.
Мана ӳпкелесе калаççĕ:
«Сайра, сайра килсе çӳрен...»

Тунма ан пăх, пурах çав çылăх
Пирте, хула çыннисенче,
Çапах çуралнă кил вăл çывăх,
Ялан, ялан чун еккинче.

Кас-кас эс тĕлĕкре куратăн
Ял хĕрринчи çӳçесене,
Е Шетмĕ хĕррине анатăн,
Çитсе тухан уничене...

Çу уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ,
Шăран, ешер те йăлтăртат!
Çĕр этеммин çапла саккунĕ:
Çурхи — çулталăк тăрантать.

Ентешĕмсем хире васкаççĕ,
Кунта та смена — пăх та кур!
Хурçă утпа çап-çамрăк каччă
Пăри акать епле маттур!

Ыраш калчи карах çĕкленнĕ,
Тымарĕнче — кĕрхи кĕрнек.

Кĕçех çуртри те ак йĕпленĕ
Пĕлтĕрхинчен те хӳхĕмрех.

Ялавлă халăх пухăнсассăн
Чăваш тĕрриллĕ клуб умне,
Итлерĕм эпĕ уçă саслă
Колхоз парторгĕн саламне.

Каларĕ лăпкăн та сулмаклăн.
Сăмахĕ хăй — тулли пучах,
Ак кам кăкăрĕнче çунать-мĕн
Вăй-хал валеçекен вучах!

Манпа пĕрле шкула чупатчĕ
Çăпататпа, кăвак йĕмпе.
Халь, ав, наука кандидачĕ,
Пыр-ха, танлаш тĕпчевçĕпе.

Кирле мучи тата... Хистерĕ
Кĕрсе хисеп тума хăйне.
— Сăра ăсасчĕ, карчăк,— терĕ,—
Нӳхреприне, симпыллине.

Симпылĕ те, ян-ян черкки те
Çĕклепчĕ тĕлпулу ятне.
Кĕнекесем...
Пĕлессĕм килчĕ
Ват çын мĕскер вуланине.

Çӳлте уçса хуни выртатчĕ,
Пăхатăп — «Аслă пуçару»,
— Ана паян ирпе тытсаччĕ,
Вăт çын-тăк çын... Вăт пултару!

Ильич... Вăл—шанчăк ĕççыннишĕн,
Чĕрешĕн — хĕмленен кăвар.
...Майпа, Октябрьпе ялйышăм
Коммунăна утать патвар.

## *ПУШ УЙĂХ*

Çук, пушă мар пуль çав пуш уйăх,
Ун хăй валли ĕç-пуç çитет:
Анчах шап-шурччĕ Танăш уйĕ,
Халь ав вăл пăсланса типет.

Шетме-и эс хевтесĕр тейĕн?
Вăл Атăл пек курать хăйне.
Е кӳршĕри Тимрук Васлейĕн
Виçес килмест-им вăй-халне?

Чăн-чăн сехет пекех юсавлă,
Кĕр-кĕр кĕрлен маттур утне
Çак канăçне çухатнă алă
Икшер тухса шăлать кунне.

Агрономпа хире кайсах вăл
Ака пирки тăвать канаш.
Ак кам çинчен сан çĕнĕ сăвă
Шăратмалла, поэт юлташ.

Улми таçта ӳкмен Васлейĕн:
Пушкар çине çунат лартса,
Арман майлана та тирпейлĕн —
Ачи тăрать халь авăртса.

Хăш йывăç чăтлăх çулçă сарĕ,
Кам çавăран йăва паха,—
Йăмралăхри курак пасарĕ
Сӳтсе явать малашлăха.

Шăнкăрчисем те шăхăртаççĕ,
Чĕвĕлтетеççĕ çерçисем,

Чунра çĕн кĕвĕ çуратаççĕ
Вĕсен саламлă юррисем.

Ăçта халь лăпкăлăх та ыйăх,—
Ураланать мĕнпур тĕнче.
Пушă марах пуль çав пуш уйăх
Ака та нарăс хушшинче.

## *ÇĔР ÇЫННИСЕМ*

Пиччемĕр ешĕл пахчара çуралнă,
Кăтра пилеш шур çеçкине çурсан.
Сар шăпчăк тутлă тĕлĕкрен вăраннă,
Пулас пахчаçă савăк сас парсан...
Йывăç чĕлхи пĕлет пиччемĕр пирĕн,
Турат чикет те çимĕçлĕ тăвать,
Асамçă пек çӳрет вăл каçăн-ирĕн,
Уйăх çине йĕкел лартма шутлать.
Çĕр çыннисем эпир, çĕр çыннисем,
Тăван çĕре хăват пиллекенсем.

Эп тăрисен юррипеле çуралнă,
Хир хумхансан, пăри пуç кăларсан.
Ик аллăмпа уя эп ыталанă,
Хăранă вăл умран çухаласран.
Эп тырă-пулă чĕлхине пĕлетĕп,
Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ ӳстереп.
Сар тулă чунăмра кашлать хĕлле те,
Хум хыççăн хум сулмаклăн хӳтерет.
Çĕр çыннисем эпир, çĕр çыннисем,
Тăван çĕре илем кӳрекенсем.

Ман йăмăк Шетмĕ хĕрринче çуралнă
Хĕвеллĕ ылтăн çумăр кĕввипе
Пĕрре куçне уçсассăнах калană:
«Тĕнчем, пулсан эп пулăп Шыв-пике».
Мелиоратора епле тиркейĕн —
Ашра пуплет вăл Шетмĕ чĕлхипе:
Куратăн-и, шыв сăрхăнать тирпейлĕн,
Пучах патне васкать сĕткенĕпе.
Çĕр çыннисем эпир, çĕр çыннисем,
Çĕр сассине чунпа илтекенсем.

## ÇĔРЛЕХИ ÇУМĂР

Каçа хирĕç пĕлĕт туртрĕ
Анлă тӳпене,
Кассăн-кассăн чупрĕ, юртрĕ
Çил енчен енне.

Кĕрлемерĕ, илтĕнмерĕ
Аслати сасси,
Çиçĕм чĕтренсе çиçмерĕ...
Чăн та, мĕн усси?

Вăй карти хуллен саланчĕ,
Сӳнчĕç кантăксем.
Майĕпен баян шăпланчĕ,—
Çемĕ пĕтрĕ тем?

Çитрĕ çумăрăн саманчĕ —
Меллĕн, тăрăшса,
Талккишпех пĕр пек тапранчĕ,
Ячĕ вăл ташша.

Вăл ташларĕ шăппăн, ăшшăн,
Çăмăллăн, хитрен.
Йывăç-курăка ачашшăн
Сĕртĕнчĕ питрен.

Ырашпа вăл пăшăлтатрĕ,
Ешĕл тулăпа,
Вăшăл çил те вăшăлтатрĕ
Савăк кăмăлпа.

Ир енне таçта пытанчĕ
Çумăр васкасах:

Тухăç хĕвелпе вутланчĕ,
Анăç та таса.

Урама çынсем тухаççĕ
Ыйхăран тăрса.
Пурте тӳпене пăхаççĕ
Пĕлĕт шыраса.

Тракторист Якур Иванччă
Шăрăх кунсенче
Уй-хире шыв уçлаканччĕ
Шетмĕ пĕвинчен.

— Пăхăр-ха, епле шăвартăм,
Пулăшрăм сире.
Кĕçĕр чăлкăм куç хупмарăм,—
Тет çак шăлйĕрен.

Халăха мĕскер,— кулаççĕ,
Халь сăлтав нумай:
Пулĕ кĕркунне кулачă,
Пулĕ аш-какай.

## *ЯЛТА*

Уçă сасă — шăнкăрав —
Янăрарĕ кантăкран...
Телефон та телеграф
Халĕ хамăр урамрах.

Çак хаваслă хĕр кулли
Хăлхара ирĕлнĕçем,
Ялăм, тахçанах пулин
Аса килчĕ пĕр сĕвем:

Служба татнă йĕркепе
Çула майлă хуларан
Чун çĕкленнĕ еккипе
Çаптарсаттăм телеграм.

Хамăр пĕчĕк станцăра
Пуйăсран юлсан анса,
Кăлăх кĕтрĕм сапера
Шавлă йыш хупăрласса.

Хăвăрт утрăм районтан —
Чăматанăм йывăр мар.
Таврăнсассăн виç кунтан
Çитрĕ эп килес хыпар.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО



21411-чув

## *ПĂРÇА ЯШКИ*

Шупашкарта, каçхи ресторанра,
Апатланать ачалăхри юлташăм.
Ятлассăм çук маттур инженера
Ĕç хыççăн çакăнта кĕрес йăлашăн.

Эрех илет, ятне, пĕрер черкке,
Çимĕçĕсем ялан ик-виçĕ тĕрлĕ.
Çук унăн ытлашши сыпас йĕрке,
Вăл çын çинче ялан сăпай, типтерлĕ.

Ыр улпутсем пекех ларать вара,
Хуллен çие-çие итлет вăл юрă,
Ĕшенĕве таçта сирсе ярать
Этемлĕхшĕн этем хайлан культура.

Çапла пурнать ентеш. Ăна курсан
Куçăм умне ялан тухать ачалăх.
Ун чух яшка паратчĕç ним çукран,
Сыпа-сыпа чĕре сури тумалăх.

Варук инкеп ыр шăршлă лаççине
Кăнтăрлапа пырса черет тăратпăр,
Шутла-шутла апат валеçнине
Ушкăнĕпех шăтарасла пăхатпăр.

Пĕррехинче пăрçа яшки илсен,
Васканăран-ши,— саккăрти сӳреçĕ
Темле тумхах çине пырса лексе
Алри кăтелукне çĕре ӳкерчĕ.

Йĕрет ман тантăш: савăт пуш-пушах,
Килте ăна халь куç пекех кĕтеççĕ.

Кунта вара ик ырханкка кушак
Шӳрпе йӗрне техемлӗн типӗтеççӗ.

Мӗн тумалла? Утатпăр лаçалла,
Ун телейне, хуран тӗпне кăшт юлнă.
Хам тӳпене ярсассăн çурмалла
Вăл кайрӗ каялла самай хăюллăн.

Никам пӗлмен пӗр пӗчӗк япала
Вăрçă тӗвви пек туйăнатчӗ маншăн.
...Юлташ, çав вырăна курма, яла
Каллех «Жигулипе» лартса каясшăн.

## *АННЕ САМАХĔ*

—

Хăва папки кӳпчет —
Ларать кăчка,
Пăр кайнă.
Шетмĕ шавласа юхать.
Мăнкун çитсен
Çуллен выльăх-качка
Хĕвеллĕ униче
Енне пăхать.

Сăлтавĕ паллă:
Аслăк тап-таса.
Кашталăх ăваса
Кăшлать ĕне.
Путеклĕ пуччăсем
Тăранасса
Тухаттăмăр сăрта
Çитермене.

Йăптăх çăмне
Тăкан качакасен
Ула тĕсне
Асилтерет çерем.
Выç хырăм
Нăчлатма тытăниччен
Тĕпĕртетсе
Таптатпăр нӳр çĕре.

Вунулттăри Хветюк
Чĕртет кăвайт —
Йăсăрланать
Утпа ĕне каяшĕ.

Кĕçех вăл вăрăм
Чĕлĕм çавăрать,
Мĕн калĕ-ши,
Çакна пĕлес-тĕк, ашшĕ?

— Эй, вăл мана
Курать-им, апăрша,
Эсир те чĕртĕр,
Тусăмсем, чикаркка!..
Вара хаçат
Хурать вăл кăларса,
Ĕнчĕкĕнчен
Сапса парать махорка.

Ĕметĕн эсĕ
Чыхăнса кайса.
Куççуль тăкса
Тем тапхăр ӳсĕретĕн.
Те лайăх,
Те усал вăл, иçмасса,
Эртелпеле
Çапах та тĕтĕретĕн.

Асан Хветюкĕ
Темиçе кунтан
Пирус чиксе пырсаччĕ
Ман пата.
— Ме, шăллăм,— тет,—
Сĕнет хайхи чунтан,—
Хăналамах
Туянтăм пасарта...

Пĕрре пускил,
Тепре анне çине
Пăхатăп эпĕ
Айăплăн, ыйтуллăн.

— Аҫу килмерӗ...
Туртах,— тет анне,—
Текех килте
Ун вырӑнне эс пулӑн...

Епле? Аттем
Нихҫан пирус хыпман,
Эп ун ятне
Вунвиҫҫӗрех таптам-и?

...Аннеҫӗм,
Ӑнланап сана аван:
Эп туртмасассӑн ҫеҫ
Чӗрӳ лӑпланӗ.

## *ТАВРĂНУ*

Ял астăвать: телейлĕн çуралсаччĕç
Çĕн саманан маттур ывăлĕсем.
Шкула чупатчĕç, лапталла вылятчĕç,
Çӳретчĕç сарă хĕвелле çиçсе.

Ӳссе пыратчĕç талăкăн, сехетĕн,
Çап-çутă ĕмĕтсемпеле хĕрсе,
Чуна парса стахановла ĕçлес те
Валерий Чкаловла вĕçесскерсем.

Çĕршыв асрах тытать! Епле пултарăн
Çĕр пек хуралнă кунсене манма?
Тухаççĕ комсомолецсем вăр-варрăн
Вут-хĕм сапан çĕлен пуçне татма.

Тĕп пулчĕ аçтаха.
Анчах юлаççĕ
Хаяр суранлă йĕкĕтсем выртсах...
Паян вĕсем яланлăх таврăнаççĕ
Тăван яла чул палăксем пулса.

* * *

Эп выртап,
выртап хирти госпитальте.
Кăшт
утма та хăтланатăп костыльпе.

Такама
йăтса кĕреççĕ ак каллех.
Пĕчĕкçеç хăй...
Туйăнать ача пекех.

Ку юлташăн
Ик ури те çук иккен,
мина татнă
çӳлерех чĕркуççирен.

Ятлаçать хăй:
— Эх, шуйттан! Итле, сестра,
ăнаймарĕ-çке атака
Леш сăртра.

Эй, атьсем-арăслансемĕр,
Çĕнмеллех!
Пурпĕрех йытта туллатпăр,
Пурпĕрех!

— Ан хумханăр,
сăрта илнĕ,— тет сестра,—
ан пăлхатăр,
капитан, кăмăлăра.

Тавăрать салтакĕ:
— Мантăн ан хурлан!
Тăван çĕрĕн ӳтĕнче, ав,
пин вуран.

* * *

— Тăвансемĕр,
Гитлер парăннă!—
Çисĕм пек çиçсе çӳрет хыпар,—
Вăрçă пĕтнĕ,
Вăрçă чарăннă,
Саламлатăп, тусăм, ална пар!

Ĕненмерĕ
Тимĕрçĕ Унисĕм
Сар хĕвел шевли пек сăмаха.
— Пĕр килтен
Ăсанчĕç,— терĕ,— виççĕн,
Утланса виç вичкĕн урхамах.

Арăслан пек
Паттăр çапăçаççĕ
Паян кун та ман ывăлăмсем.
Вăрçă чарăнман,
Ахаль калаççĕ,
Чарăнсассăн килеççех вĕсем.

* * *

Чул палăк лартнă
Ĕмĕр асăнмалăх
Çичĕюта
Тĕп тунă çынсене.
Çуркуннепе
Кунта пасар пек халăх
Чыслать
Мухтавлă пăхаттирсене.

Çулсеренех
Типтерлĕн пухăнаççĕ
Вут-çулăмра
Шăраннă салтаксем.
Ах, çӳçĕсем
Шурсах, шурсах пыраççĕ,
Полк йышĕ те
Чаксах пырать вĕсен.

Кăçал та виççĕн килеймен...
Мĕн калăн?
Хаяр вăрçа
Манма пĕлмен чуна
Ветерансем
Ăшпиллĕн те хаваллăн
Заданирех
Çӳренĕн туйăнать.

## *АНУШ АППА*

Ануш аппа ҫӳл тӳпене сӑнать,
Шырать хыпарсӑр ҫӗтнӗ ывӑлне.
Ҫӗн уйӑх ун асаплӑ чӗрине
Ачин йӑл-йӑл кулли пек туйӑнать.

Ануш аппа ҫил сассине тӑплать,
Куллен тухать уя, уничене.
Ҫав сасӑ ун суранлӑ чӗрине
Салтак юрри янранӑн илтӗнет.

Ануш аппа шыв хӗррине анать.
Пӑхса тӑрать хумсем вылянине.
Хум айӗнчен кӗтевлӗ чӗрене
Кӗҫ кӑтра пуҫ курнассӑн туйӑнать.

* * *

Кĕрхи тӳпе — вĕç-хĕрсĕр улăх:
Унта ем-ешĕл утă тулăх.

Çынсем йышпа каю çулаççĕ,
Çависене вăш-ваш сулаççĕ.

Хĕрелчĕ, сӳнчĕ ĕнтĕ анăç,
Ку ĕçченсем хăçан-ши канĕç?

Палларăн-и эс çав йыша?
Хуркайăксем вĕçеç ăшша.

## *ÇУЛÇĂСЕМ*

Саркайăксем
Пасар тăваççĕ тейĕн:
Çунатлă,
Кĕмĕл питлĕ çулçăсем
Вĕçеççĕ,
Çаврăнаççĕ айĕн-çийĕн,
Шух çил
Туратсене хумхатнăçем.

Ай, пĕр кана
Выляççĕ, алхасаççĕ,
Унтан анса лараççĕ
Çĕр çине...
Çапла колхозăн
Шукăль тумлă сачĕ
Хывать,
Сарса хурать
Сар кĕрĕкне.

Сентябрь те кăçал
Хĕвеллĕ, шăрăх,
Аса илетĕн эсĕ
Çу кунне.
Курсамăр:
Чăштăр-чăштăр çулçă тăрăх
Утать
Пуян та мăнтăр кĕркунне.

* * *

И, шыв юхать, шыв шăнкăртатать,
Юхать кункăра пек валакран.
Турат çинче шăнкăрч ыхăрать —
Ĕнер кăна вăл çитнĕ кăнтăртан.

Шăнкăрч юрлать, юрлать вăл кунĕпе,
Шăнкăрти валак, тен, кĕвĕçет.
Шăнкăрч çунат çапса юрланипе
Лаша çилхе усса шыв ĕçет.

## *ЮРПИКЕ ТĔРРИСЕМ*

Çурхи кун çеç чечеклĕ тетĕр-и,
Пĕр ăна çеç савса кĕтетĕр-и?
Çук, йăнăшатăр, хаклă тусăмсем,
Хĕллен те пур чечекĕсем.

Эсир курман-тăр: унăн пур пике,
Черченкĕ питлĕ, çĕнĕ юр пекех.
Çав хĕр, эпир выртсассăн, сĕм-çĕрле
Асамлă тĕрĕ тĕрĕлет.

Çиппи ун шурă пурçăн çип кăна,
Анчах эрешĕ тыткăнлать чуна.
Кам панă тĕрĕçе асамлăхне,
Кам панă-ши ăсталăхне?

Йĕппипеле чике-чике туртать,
Хăй шăппăн юрату юрри юрлать.
Вара сар каччă тутлă тĕлĕкре
Курать ĕмĕтĕнчи хĕре.

Тăрать те йĕкĕт — кантăка сăнать,
Ана чечек çыххи телей сунать.
Чăнах та, çавăн пек паха парне
Аçта тупайăн çуркунне?

## ТИМĔРЕ

Анланатăп, пĕчĕк Тимĕр:
Выляннийĕ çакăнта,
Хăв юратнă пăтă-нимĕр
Ĕмĕр юлĕ асăнта.

Эпĕ хам та ача пусăн
Илтереттĕм салмана,
Йывăç чашăкăн ăш кусĕ
Халь те илĕртет мана.

Ах, аппаçăм, ыр аппаçăм,
Яслири чипер аппа,
Эс юрлаттăн ачапчашăн
Çепĕç, çепĕç сасăпа...

Пурпĕрех киле туртатчĕ.
Çавă çав: анне тенин
Хăй патне чĕнес хăвачĕ
Ĕмĕрех çунать сӳнми.

Эс те, Тимĕр, утăмлатăн
Совхозри ача садне,
Хăвăн чĕлхӳпе вăрçатăн
Килĕшмен йĕркесене...

Çулăхсассăн пĕр тăрлавсăр,
Ун çине тарăхнипе
Эп кайсаттăм каламасăр
Хамăръен сукмакĕпе.

Яслири Якку Валерĕ
Ун пекех чавмастчĕ, тен?

Ҭалпиçенĕ те йĕплерĕ,
Вĕтелерĕ вĕлтĕрен.

Тимĕр, пĕччепех тухсассăн
Çав хитре кăпа çуртран,
Çул суйлапă чух, тархасшăн,
Аслăрах пулсам манран.

Кураксем вĕсем çĕр тĕрлĕ:
Çимĕçли те сиенли.
Çавсене, тăванăм, кирлĕ
Уйăрса илме пĕлни.

Хăшĕсем этемшĕн сиплĕ,
Хăшĕ ухмаха ертет.
Кам çавна уять пит тĕплĕ —
Чирĕ-чĕрĕ те иртет.

Суйласси çапла пуçланĕ,
Пĕчĕк паттăрăм.
Кайран
Çынпа çын та пĕрмарланĕ,
Витĕр куçпала пăхсан.

Ун пирки нумай палкамăн.
Ӳлĕмрен ак, çитĕнсен,
Пулăн аçупа пĕр калăп
Чăннипе суйи енчен.

Уйăрма пĕлни, тăванăм,
Хăй кăна питех сахал.
Кирлипе эс хавхаланăн:
Тупăн кĕрешме вăй-хал.

Халăхшăн, çĕршывшăн тăрăн
Аслă чăнлăх ячĕпе.
...Халь вара сан, пăхаттирĕн,
Ӳсмелле патвар, чипер.

*МĂШĂР ÇУНАТ*

*«Çамрăк коммуниста» — çур ĕмĕрхи хаçата*

Йĕп чиксен те кус курмасть. Пăч-тĕттĕм.
Таврăнать ялкор ячейкăран.
Сисеймерĕ — сикрĕç-тухрĕç иккĕн
Апатран килеп тăкăрлăкран.

— Эс-им-ха вăл элексем яратăн
Хаçата ялти ыр çын çинчен?
Ме, туян! Алхасрăн та — туянтăн,
Çыр, эппин, тежех леш тĕнчерен!

Ачана урса кайса тулларĕ
Икĕ кашкăр — ик хура çăхан.
Пăхăсăн! Пăшал та хуплаймарĕ
Сар хĕвел çути пек чăнлăха.

Çав сутта, çав чăнлăха, хаçатăм,
Пайăр-пайăркан, шевлен-шевлен
Çынсене эс валеçсе тухатăн,
Çĕнĕ вăй пиллеп пире куллен.

Ирхине, сана илсен ынатлăн
Мăшăр çунатла сарсассăнах,
Чун-чĕрем те сарлака çунатлăн
Кăйкăр пек вĕçмешкĕн тытăнать.

Самантрах таçта та эс çитетĕн,
Тĕл пулатăн инçетри туспа.
Тăшманпа та тытăçса илетĕн;—
Ан çӳретĕр пăсăк шухăшпа!

Аслă халăх юхăмне кĕретĕн,
Унпала утатăн эс патвар.
Чаплă самана, ĕççи кĕтречĕ
Кăкăрта чĕртеççĕ шĕл-кăвар.

Тав сана, яш-кĕрĕмĕн ялавĕ!
Аллăмра ак — аллăри хаçат.
Аллăра... Анчах куллен малта вăл,
Вичкĕн куçлă тус пек калаçать.

## *БЕТОНÇĂСЕМ ПАТĔНЧЕ*

Юпа уйăхĕнче татасшăн çуннăн
Çулла ӳсгернĕ парăм тӳпине,
Сив çумăр пĕрĕхетчĕ çĕрĕн-кунĕн
Сисмесĕр уссăрах тăрăшнине.

Малашлăхра йĕркелĕç-ха, вăл паллă,
Ак тăвĕç çумăрне те чармалла,
Çил-тăвăлне те сирĕç,— çутçанталăк
Этем ăс-хакăлне пăхăнмалла.

Паян тесен, шĕвĕ кĕрет пек пылчăк
Юхса кĕресшĕн атă кунчинчен.
Самантлăх канмалли сăлтав пек пулчĕ
Эпир çитни бетон бригадинче.

КРАЗ ушкăнĕ черетлĕ ăстрăмраччĕ.
Çав вăхăтпа усă курса, пире
Кунти яш-кĕрĕм сăвă калаттарчĕ
Васкавлă тунă пĕр хăма пӳртре.

Хĕвел шевли йăлт-йăлт сиксе вылярĕ
Çут çăлтăр пек хĕлхемлĕ куçсенче.
Қашнин чунне тaçта астарчĕ мар-и
Поэзи, шухăш-туйăмлă тĕпче!

Чăваш сăвви кĕсле пек янăрарĕ,
Пурах хăвачĕ лирика тепин,
Вăл шанчăк çуккине çупатлантарĕ,
Уппа тус пулĕ ĕмĕр пĕччеппи...

Вулаттăмăр.
Яр уçăлчĕ те алăк,

— Бетон! — тени хупларĕ пĕтĕмпех.
Пĕр çын пекех çĕкленчĕ харсăр халăх,
Васкарăмăр эпир те вĕсемпе.

Çыравçăсен шур аллисем хĕрелчĕç
Çамрăксемпе хĕрсе ĕçленĕçем.
Бетонпала пĕрлешрĕ сăвă речĕ,—
Ма çирĕп пулмĕç цех никĕсĕсем?

Мотор кĕрлевĕ, сив йĕпхӳ лӳшкевĕ,
Çак йыш ĕçченлĕхĕпеле тулса,
Чун-чĕрере çуратрĕç çĕнĕ кĕвĕ,
Вăл пусарать ытти мĕнпур сасса.

Унпа эп хама хам туяп
маттуррăн,
Вăл хăвалать имшер туйăмсене,
Çав кĕвĕ халь чи çирĕп арматура
Пулса кĕрет юрлас юррăмсене.

## *ПАРХАТАР*

Туссем, аслă Атăл хăватне
Хушнă пин çăлкуçра шырама.
Енчен, пин çăлкуçăн
шывĕ пĕтсен,
Атăл пулса юлĕ тип çырма.

Çут çăлкуççем
Нихçан сӳнес çук.
Вĕсем ĕмеççĕ çĕрĕн кăкăрне.
Çĕршывăн кăкăрĕ
чĕр-сывă чух
Курăпăр-çке Атăл пархатарне.

Тăвансемĕр,
Пурнăç илемне
Хушнă пин юлташра шырама.
Сутсан
Çав пин юлташ ĕненĕвне,
Сан пурнăçу кайĕ харама.

Ай-хай,
Ялйышăмсем, тус-тăвансем.
Нихçан пĕрне-пĕри
Пăрахар мар.
Хурлăх тарĕ
Эпир пĕр пулнăçем,
Пурнăç парĕ
Пире пархатар.

## *ХИРТИ ХИРĔÇӲ*

Паллах, сайра хутра кăна,
Анчах пулать çакăн пекки те:
Темскер çитмест çынпа çынна,
Вĕсем хĕрсе каяççĕ питĕ.

Хирте курсаттăм тавлашу:
Икĕ инке шăв-шав çĕкленĕ.
Тăварлă, йӳçĕ харкашу...
Мĕн тăвăн,— эпĕ—итлекенĕ.

Туятăп, иккĕш те вĕри,
Сăмахсене яра параççĕ.
Юлашкинчен вара пĕри
Тăпра кăшларĕ, çăтрĕ ячĕ...

Ку хирĕçӳ нимех те мар,
Кăшт шавлакалĕç те лăпланĕç.
Чупра яраймĕ вăл тымар —
Ятлаçăва кĕç витĕ манăç.

Анчах тăпра çини мана
Тахçанччене шухăшлаттарчĕ,
Пĕр çӳçентерчĕ вăл чуна,
Тепре тăрук ăшăрхаттарчĕ.

Ăнлантăм çĕрĕн хăватне —
Эп çеç-и, кашниех ăнланĕ:
Вăл — пирĕн пулăхлă анне,
Вăл — пирĕн чăнлăх эталонĕ.

* * *

Йăваш этем ӳсĕрпеле
Виçесĕр урмăшнăн, айкашнăн
Çурхи хĕвел хевтипеле
Ман Шĕтмĕ те çыр урлă каçнă.

Тăратăп сăрт çинчен пăхса.
Шыв анчĕ, тулнăçемĕн тулчĕ.
Кĕç кайрĕ ейĕве тухса,
Юхăм айне хăвалăх юлчĕ.

Пĕрне-пĕри ватса, хирсе
Пăр куписем таçта васкаççĕ,—
Хир сыснисен кĕтĕвĕсем
Хăрушлăхра çапла куçаççĕ.

— Кĕркуннеччен, кĕркуннеччен,—
Тесе, хуллен сулатăп алă.—
Ун чух каллех çут хумсенчен
Сивĕ Мучи кĕпер ăсталĕ...

Анчах хаваслăха кайран
Кичем шухăшăмпа витетĕп:
Пулаймĕ пăр шăп çав шывран
Шăп çав тĕлте ĕмĕрĕпе те.

* * *

Çĕн пĕркеленчĕк асăрхарăм
Паян эп куçăм айĕнче.
Кĕмĕлленсех пырать тăнлавăм...
Чупать иккен Кунçул пичче!

Эппин, килет шур çӳçлĕ ватлăх
Пĕр курăнса, пĕр пытанса.
Анчах çак кăткăс ыйтăва та
Татасшăн эпĕ пит ансат:

Шăрт пек сухал шăтса хуплаймĕ
Çут çиçĕмле çиçен чуна.
Мĕнех вара çамка хутламĕ?
Ват çыншăн вăл илем кăна...

## *ЧИ КИРЛИ*

Кăрлач сăрлать
троллейбус кантăкне,
Тырпул та йывăç-курăк ӳкерет.
Çĕршывăн çуллахи пуласлăхне
Хĕл кунĕнчех куратпăр куçкĕрет.

Ыраш пучахĕ пур, пилеш кăтри,
Туни-вулли—çинçе, яштак, капмар.
Ав, чи кирли те ӳкнĕ, куртăр-и:
Кашни ӳсентăранăн — лăс тымар.

## *ТУССЕНЕ*

Юлташсене
Мансах пыран тесе,
Мана ӳпкелешме
Пăхать юлташ.
Пĕлместĕп,
Тен, калать пуль тĕрĕсех
Чĕп-чĕрĕ куçлă
Ытарми чăваш?

Туса манни,
Паллах, вăл ырă мар,
Ана эп
Анкаратăп ачаран:
Сĕткен çукран
Типсе хăрать тымар,
Мĕскер кĕтес
Тымарсăр йывăçран?

Таса хĕвеллĕ
Çутă кунăмсем
Çӳретнĕçемĕн
Тĕрлĕ сукмакпа,
Çулри-йĕрти
Хавас тĕлпулусем
Çĕн пĕлĕшсем
Пиллеççĕ кăмăлпа.
Паян туссем
Енерхинчен нумай,
Ыран татах ак
Тупăнĕç вĕсем.

Епле-ха,
Пĕринпе калаçнă май,
Пурне те
Харăсах сăмах чĕнем?

Мухтав турра,
Ӳсет-ха çав хисеп!
Кашнин патнех
Çитесчĕ хăнана,
Анчах талăкĕнче,
Аван сисеп —
Çирĕм тăват
Кĕске сехет кăна.

Пурне те
Асилме васканăран
Çырăвăмсем те
Шухăшсăр, кăнттам,
...Тăванăмсем,
Сире ăçтан манан?
Ытлăттăм —
Анчах çитмест ытам.

## ПУШАНАРКА

Янсакасси енчи
Сап-сар хирсем
Куç умĕнчех
Васкавлăн пушанаççĕ.
Çыннисене
Штурвалсемпе рульсем
Вĕрентнĕ чĕрчунсем пек
Пăхăнаççĕ.

Кунта çуллен
Килетпĕр Ĕçхĕлпе,
Комбайн умĕнчех
Вулатпăр сăвă.
Пуплевĕмĕр ыраш
Пучахĕ пек
Пулинччĕ тап-таса,
Сулмаклă, сывă.

Ай-хай, кунта
Пĕлеççĕ итлеме,
Чĕлхе чăн техĕмне
Чунпа туяççĕ,
Пирĕнешкел
Хăналăх этеме
Çулталăклăх
Çунат хушса яраççĕ.

Ак таврăнатпăр
Ӳй урлах, çуран,
Çатăртатса юлать
Хыçра тип хăмăл.
Çĕр çыннисем

Аван йышăннăран
Туçи вăрманĕ пек
Çÿлте ман кăмăл.

Умра — çырма
Чĕлтĕртетсе юхать,
Сарлака мар,
Сиксен каçма та пулĕ.
Сăвăç-пичче
Мана паллаштарать:
— Ку — Пушанаркă,
Мăн Çавал юппийĕ.

Çавал юппи, тет,
Типнĕпе пĕрех,
Анчах эпир
Пушанмăпăр, тăванăм.
Халăх чунне
Туйса тăма пире
Çак çĕр, çак шыв
Ĕмĕрлĕхех хал панă.

Мĕнех çырма?
Ак тăвĕç те пĕве,
Кунта тем анлăш
Тăрă шыв хумханĕ.
Поэт типсессĕн,
Вăл калас кĕвве
Кам пулĕ
Çакăнта янратаканĕ?

Çыравçă хавхаланнă
Çын çинче,
Çав туртăм
Ун ятне çÿле çĕкленĕ.

Эппин,
Çӳрер-и хамăр ялсенче,
Юнра ан чактăр
Çĕр-анне сĕткенĕ!

## *ВУНИККĔМĔШ ХУТРА*

Вуниккĕмĕш хутра, балкон çинче
Хĕрсем юрлаççĕ юрату юрри.
Юрри юхать ай-хай инçе, инçе,—
Илтсен, ăмсанĕç шăпчăк та тăри.

Çĕкленчĕ тепĕр селĕм, капăр çурт,
Илем кӳмешкĕн шур Шупашкара.
Ана малтан саламлĕ кăвакçут
Çĕн кун пилленĕçем хуламăра.

Пăхатăн та кĕрнеклĕ кермене,
Асилтерет вăл йăрăс йывăça.
Çунатлă юрăçсем уп тăррине
Савса иленнĕн курăнать куçа.

Чăваш çĕршывĕн çепĕç пикисем,
Чун-чĕререн сунатăп ăшăмра:
Сире юратчăр савнă йĕкĕтсем,
Шӳтле калас-тăк, чи çӳлти шайра.

* * *

«Шаккатăн, мĕскĕн маятник, шаккатăн,
Стена сехечĕн çут решеткинчен
Часрах тухса тарасшăн талпăнатăн»,—
Тесе шӳтлерĕн эс пĕррехинче.

Хирĕçлесе нимех те каламарăм
Хам урăхла шутланă тăркачах.
Мана вăл туйăнать кĕреш-патварăн,
Каясшăн мар вăл ирĕке пачах.

Мĕн-ма тарас-ха? Кил хуçи тирпейлĕ,
Çуне сĕрет, тусанланма памасть.
Тата ĕçчен пĕр ĕçпеле телейлĕ,
Çĕр тĕрлĕ ĕç хаваслă тăваймасть.

Ку сехете завод парнелесеччĕ,
Унта кĕпи вунпилĕк çул тулсан.
Малашлăхра та çавăнтах тимлесчĕ
Эп вăй хуни усса пырать пулсан.

Анлантăм, мĕншĕн таркăнăн куратăн,
Мĕн-ма хурлан эс вăхăтшутлавça:
Хăв çулленех ик-виç çĕре куçатăн.
Ялан шыратăн шит тăршшĕ укçа.

## *ТЕТРЕ*

Кĕрхи хура каçпа шут тунăн
Тăкать сив çумăр çўпçерен.
«Çулла çапла çăвасчĕ унăн»,—
Тет урамри иртен-çўрен.

Ирпе тухан — йăлтах шăпланнă:
Çўçеннĕн пăсланать сентре.
Хула çине шур пĕлĕт аннăн
Йăсăрланса тăрать тĕтре.

Троллейбуссем çула тухмаççĕ
Мĕскĕнленсе, çунат усса.
Самолетсем ахаль лараççĕ,
Кĕтеççĕ кун уяртасса.

Çанталăка хурлассăм пур-и,—
Текех вăл килĕ хамăртан.
Анчах сивлек тĕтрелĕх мурĕ
Час сирĕлмерĕ умăмран.

Эп çав ирпе пачах тухманччĕ
Юман сĕтелĕм хушшинчен,
Пĕр сăвăç вулама парсаччĕ
Кĕнекине тепĕр кунччен.

*ТИНЕС*

Шур сурӑхсем,
Пуҫӗсене чиксе,
Чарусӑр пӗрхӗнтернӗн
Катана,
Шап-шур хумсем,
Йӑваланса, сиксе
Ҫапаҫҫӗ
Хӑйӑр ҫунӑ ҫырана.

Вӗсем
Курнаҫҫӗ витӗр: кӑн-кӑвак.
Ун пек кӑвакла̌х
Тӳпере кӑна.
Асамлӑн
Туллашса выртан хӑват
Сирет шыври
Кашни япалана.

Эп сӑвӑҫ савнӑ
Тинӗс анӗнче
Темскер уҫатӑп пек
Хама валли:
Пур Ҫеҫпӗллӗх
Мӑнаҫлӑ хумсенче,
Пур Ҫеҫпӗл чунӗнче
Хумсен палли.

*ПАРНАС ÇИНЧЕ*

Парнас çинче çап-çут сăртсем нумай,
Йăлтăртатса лараççĕ вутăн-хĕмĕн.
Пĕр сăрчĕн ячĕ — Петĕр Хусанкай,
Хăй майлă унăн кӳлепи, илемĕ.

Тăван Сиктĕрмепе Шупашкартан
Çав ылтăн палăк курăнать ир-каçăн.
Мускав, София, Прагăсем таран
Чăваш поэзин çăлтăрне сăнаççĕ.

Çав сăрт тавра — çынсем. Кама куран?
Тăхта-ха, сăнĕсем те палăраççĕ.
Пĕри, ав, Сантăр, çĕлĕк çавракан,
Ун çумĕнчи — леш Элтиван — хуралçă.

Патвар та йышлă Аптраман тавраш,
Энтри те Басов, Натали, Сумбайĕ...
Кунта, тăванăм, пĕлĕш-хурăнташ
Çĕрпӳ пасарĕнчи пекех нумайăн.

Пĕри, ав, йĕтĕн сухалли, юрлать,
Кĕрекере симпыл валеçнĕçемĕн:
«Мехел тени мĕскер тени пулать?»
Тилли, Тилли! Ку — эс пуçарнă çемĕ.

Мехел тени ялан çитсе пырать,
Пурнатпăр-ха, çӳретпĕр ырă-сывă.
Килĕрепех янрать, мухтав турра,
Тиллимĕр, эс шăратнă юрă-сăвă.

Уйлав-хайлав пурне те илĕртет,
Ана кашни-пĕр тытăнса пăхасшăн,

Анчах телей пинтен пӗрне тӗллет,
Ытти вара — ан асаплан, тархасшӑн.

Эпир пӗрремӗш тӗрӗслев кунне
Хуллен чӑтса ирттертӗмӗр пуль тетпӗр.
Ҫав сӑлтавпа асамлӑ сӑрт енне
Чун куҫӗпе сӑваплӑн тинкеретпӗр.

Ҫаласнӑ — каласнах, чӑнне калар:
Хӑш чух тивӗҫеймест чӗре мехелӗ.
Тавах, сапса ларать хӗлхем-кӑвар
Поэт пиччемӗр сӑрчӗн ҫут хӗвелӗ..

## *ИКĔ ПАЛĂК*

Çатăл хум
Çупăрлать çырана,
Бай выляççĕ çĕки те карасĕ.
Халăх сăвăçĕ — аслă Некрасов
Атăла куç илмесĕр сăнать.

Атăла куç илмесĕр сăнать.
Халь ăна илĕртет пулă мар,
Анатра — çывăхрах — Шупашкар,
Шурă-шурă хула, курăнать.

Шурă-шурă хула курăнать.
Çыранра — чăвашсен юрăçи.
Ун сăмахĕ, кĕвви — чун уççи —
Пăшехун таранах янăрать.

Гражданин, умăнта пуç таям.
Сăмаху илтĕнет чĕрене:
Пархатарлă Силпи йĕкĕтне
Атăл тăрăх яратăн салам.

## «ВĔÇ, ВĔÇ, КУККУК»

Çине-çинех
Юрлаттарасшăн пулчĕç,
Пире юрламасан та лайăх мар.
Шӳт кĕввипе
Хăйсем те савăк кулчĕç.
Хурлăхлине те сисрĕçĕ вăр-вар.

Эх, юрă, юрă!
Тухату хăвачĕ
Тухать-тĕр сан асамлă çеммӳнтен.
Çунаттусем
Чуна тӳр çул хываççĕ,
Хăш чĕлхепе эс çӳресессĕн те.

«Вĕç, вĕç, куккук...»
Вăрман хĕрне те çитрĕн,
Ларса та кантăн чăрăш тăррине.
Эс кăкарти
Хĕлĕхсене чĕтретрĕн,
Хускатрăн ятăн вырăс чĕрине.

Владимир Жуков...
Шăппăн-шăппăн ларчĕ
Иваново поэчĕ кĕтесре.
Тем самантра
Ик кăвак куç шывланчĕ,—
Вăл тутăрне кăларчĕ кĕсъерен.

Хăтамăрсем,
Юмарт туссем, чăтсамăр,
Эпир кĕрекĕре пушатиччен.
Юрлатпăр та
Мăнаçланатпăр хамăр:
«Чăваш кĕвви те пур хитре тĕнчен».

## *ПУРНĂÇĂМ-КУНÇУЛĂМ*

Çилхăван ачалăхăм, эс тартăн,
Шăхăрса, пылаккăн йăл кулса.
Пылакне кăна-и тутантартăн —
Йӳççине те юлтăмăр курса.

Шур чечеклĕ яшлăхăм, эс тартăн,
Юрласа, телейлĕн йăл кулса.
Телейне кăна-и тутантартăн —
Инкекне те юлтăмăр курса.

Пурнăçăм-кунçулăм, эс таратăн,
Выляса, асамлăн йăл кулса.
Ырлăх-шырлăх ывçăпах паратăн,
Усалли те ывçипех пуль сан?

## ÇАКĂ ЯЛТА ВИÇĔ КАС

Каврăçкасси тееççĕ,
Каврăçкасси тееççĕ.
Каврăçкасси ачисем
Каврăç тĕлне пĕлмеççĕ,
Каврăç хăшĕ тесессĕн,
Катăркаса тĕллеççĕ.

Пилешкасси тееççĕ,
Пилешкасси тееççĕ.
Пилешкасси хĕрĕсем
Пилеш тĕлне пĕлмеççĕ.
Пилеш хăшĕ тесессĕн,
Палан çине тĕллеççĕ.

Çирĕккасси тееççĕ,
Çирĕккасси тееççĕ.
Çирĕккасси çыннисем
Çирĕк тĕлне пĕлмеççĕ.
Çирĕк хăшĕ тесессĕн,
Çӳçе çине тĕллеççĕ.

Çара ялта — виçĕ кас,
Сĕм вăрманĕ — виç утас.
Пурпĕр йывăç лартмаççĕ,
Ялĕ ятне яраççĕ.

* * *

Чавсипеле хирсе тăрмашакан
Сăваплă çул хывайĕ-ши хăйне?
Куçран сив хĕм сапса шăл хăйракан
Вутран йăтса тухайĕ-ши тусне?

Хура хĕвне чул чикнĕ эсреметĕн
Ырра ĕметленмешкĕн тивĕç çук.
Мĕн ытлашши—кала куçран, кĕретĕн,
Сыв пултăр пархатарлă хирĕçӳ!

* * *

Ан пул çил ачи пек вылянчăк,
Сăлтавсăр-мĕнсĕр ан епре:
Çăмăллăхра çухалĕ шанчăк,
Çухалĕ... Тупăнмĕ тепре.

Ан пул эс йӳç кăшман пек йӳçĕ,
Ан пул пин йĕплĕ таллиçен:
Кунçул сукмакĕпе иртӳçĕн
Пит йывăр юлташсем писсен.

## *КАНАШ*

Вунсаккӑрти чипер Светлана
Манран ыйтса пӑхма шутланӑ
Качча тухас пирки канаш:
— Мӗнле шутлан, поэт юлташ?

Каччи пӑхаттирле хастарлӑ.
Каҫхи студент. Ку пархатарлӑ.
ЗАГСа та заявлени панӑ.
Анчах иккӗленет Светлана...

Иккӗленет, ҫунать Светлана,
Паян ӑна кашни ӑнланӗ:
Уп ҫамрӑк, ырӑ чӗринче —
Ик ҫын, ик пурнӑҫ, ик тӗнче...

«Ку аслӑ вунӑ ҫул манран,
Леш тантӑш, хамӑрӑн ялтан,
Ку — укҫине шутлать ялан,
Леш — юрӑҫ, купӑсҫӑ. Талант».

Виҫет чӗре,
Суйлать чӗре,
Чӑнах та, йывӑр халь хӗре.
Йӑлтах килет ҫак утӑмран:
Е ыр куран,
Е хур куран.

Уҫать Светлана сумкине,
Илет ҫамрӑкраххин сӑнне.
Туяп: вӑл килӗшет ӑна,
Уп патнеллех чун туртӑнать.

Сӑмахӑм ман ҫапла, пикем:
Пайлаймӑн чӗрӳне икке.
Ан пӑх, тархасшӑн, эс мулне,
Пӑх каччӑн шухӑш-кӑмӑлне.

* * *

Упраймарĕ упăшки хăйне...
Чунĕпех ĕçе парăннăскер,
Сăнавне чипер вĕçлес чухне
Пĕтрĕ çут малашлă инженер.

Ни куççуль, ни вĕççĕр йăлăну
Юлташа тек таварса килмест.
Мĕн тăвас-ха: çĕнĕ улшăну
Çухатусăр пурнăçа кĕмест.

Вăл сана саватчĕ чĕререн,
Эс унпа йăпаннă ахалех:
Пытарсассăн икĕ эрнерен
Упăшкаллă пултăн ак каллех.

* * *

Улăхра пĕччен вĕçен текерлĕк,
Сан сассу мĕскершĕн-ши пит
эрлĕк?

Тен, эс çумăнти тусна çухатнă,
Тен, сан йăвуна такам пăлхатнă?

Ах, паян пĕччен-çке эпĕ хам та,
Вут çинчи пек, вырăн тупаймастăп.

Каçсерен кунта эпир хуçаччĕ,
Çав хĕрпе çӳрет халь урăх каччă.

Пĕртăван эпир санпа, текерлĕк,
Кăмăлсем кĕрхи йĕпхӳ пек эрлĕк.

*УКҪУК*

— Кĕпе тĕрлетĕн-им, Укçук,
Ай-яй, тĕрри паха.
Савни валли пуль-ха?
— Çук, çук, аппаçăм, çук...

— Çыру çыратăн-им, Укçук,
Енчен енне пăхан,
Каччу патне пуль-ха?
— Çук, çук, пиччеçĕм, çук...

— Ма măн çула сăнан, Укçук,
Тем сиснĕн кускалан?
— Аннеçĕм, салтакран
Таврăнмалла Кĕçтук.

* * *

Сăвă çыртăм, çыртăм — ыртăм.
Каркăçсен хушăкĕнчен
Çутă çăлтăр вăрттăн-вăрттăн
Пăхрĕ уйăх сисиччен.

Каçсерен, тен, йăлкăшать вăл
Тӳпере ман ятпалах?
Çунтăр, çунтăр! Эпĕ хапăл,
Анчах пĕл ăна, палла!

Урамах тухса пăхатăп:
Илĕртер-ха кантăка!
Хамăн çăлтăра тупатăп —
Çухатмастăп шанчăка.

...Эх, эс, Хĕл Мучи хăвачĕ,—
Юр ӳкет пин аларан.
Килĕм умĕнчи юпа çеç
Куç хĕссех кулать манран.

* * *

Шап-шурă хут листи умра.
Турпас шăрши кĕрет унран...
Ăçта шавланă-ши çав йывăç?
Çăка вăл пулнă-ши е ăвăс?

Ун ешĕл тураттисене
Аш çил лăпкана касхине.
Çанталăкпа киленнĕçем
Юрланă пулĕ чĕпчесем.

Эп халĕ çак шур хут çине
Çырасшăн чунăм кĕввине.
Унта çав шухăш чăшăл! кайĕ,
Хавассăн шăхăрĕ саркайăк.

## *ТĔЛПУЛУ ХЫÇÇАН*

— Поэт юлташ,
автограф пар!
— Çырсамччĕ сăвăлла...
— Пĕр-ик кĕнекӳне хăвар,
Парнслесе яла.

Паратăп. Тăхтăр çеç пăртак.
Тем мар ал пусасси.
Анчах та сирĕн чунăрта
Пулать-ши юласси?

## ÇИЛХЕЛЛЕ ЮХАМ

Ака уйăхĕ. Çанталăк
Кăкăрне йӳле ярать.
Мăй таран шыври хăвалăх
Сарă кăчкă кăларать.

Çĕрпӳрен иртсен тăраççĕ
Ик Çавал пĕрешкеле,
Катаччи ярăнтараççĕ
Юлашки хутчен хĕле.

Хĕрринчи тӳрем тӳреклĕн
Шукалать хуллен-хуллен.
Чул ватас хăват — çилхеллĕ,
Ыткăнать варрипелен.

Вăйпитти, мăнаçлă Улăп
Пурнăç пек выртать умра.
Ĕмĕрĕм, ялан эп пулăп
Чи хĕрӳллĕ юхăмра.



# АСЛĂ ХУРАЛ

* * *

Танксем лараççĕ ретĕн-ретĕн
Никам çĕнми пăхаттирле.
Хурал сукмакĕпе çӳретĕп
Автоматпа эп сĕм-çĕрле.

Ем-ешĕл вĕтлĕхлĕ тӳремлĕх.
Унта-кунта — лаштра тирек.
Полк кăшт канать те вăй илмелĕх,
Инçе çула тухать ирех.

Кас тĕттĕм. Пурпĕр куçăм витĕр,
Кашни сасса илтет хăлхам.
Усал шут тытнă çын ан килтĕр
Тесе пăхатăп чăтлăха.

Чун тимлĕхне сиенлемесĕр
Каять ман шухăш аякка,
Ялне-йышне аса илмесĕр,
Чăнах та, йывăр салтака.

Эп самантра вĕççе тухатăп
Амур çине Буг хĕрринчен.
Мĕнпур Союзăма куратăп
Тăван çĕршывăн постĕнче.

* * *

Пире нимĕç полкĕ ăсатрĕ
Ирпе, çар ваййи вĕçленсен.
Кашни хăй тусне ыталарĕ
Хул-çурăм шăт-шат тăвиччен.

Чăпах та, халь урлă илес-и,
Тахçан вăрçă пулнă тесе,
Сĕкес вăкăр евĕр çиллессĕн,
Çӳрес-и паян вĕчĕхсе?

Çук, çук! Вилĕм сапнă çав тапхăр
Килеймĕ текех çĕр çине.
Ахаль-и, туссем, хураллатпăр
Эпир çур тĕнче чиккине?

Румынĕ, пăлхарĕ, полякĕ
Тăратпăр пĕрле, юнашар,
Мĕнпур ĕçлĕ халăх салтакĕн
Епле пĕртăван пулас мар?

...Пире нимĕç полкĕ ăсатрĕ
Ирпе, çар ваййи вĕçленсен.
Понтонлă кĕпер тăнкăртатрĕ
Эпир ку енне каçиччен.

Унтан ăшă çумăр тапранчĕ
Хĕвел йăл кулли витĕрех.
Çич тĕслĕ салтак асамачĕ
Пĕрле ыталарĕ пире.

## *ÇУР ÇУЛ КĔÇЕННИСЕМ*

Хушши — çур çул. Анчах та вăл — «в[illegible]».
Вăр-вар та. Салтаках çуралнă-шим?
Мана калать пек: «Амсантарчĕ-им,
Кĕç ху та хăнăхăн. Анчах чим, чим,
Халь çи-ха ытларах эс вир пăтти!»

Вăл çеç-и, пурте çăмăл та хастар,
Юрăпалах, ав, кайрĕç наряда,
Ĕнтĕ эпир те ешĕл симĕс мар,
Куллен ăшша пиçсе тăкатпăр тар,
Çапах та асăнмаççĕ-ха ята...

Хурал валли çынсем суйланă чух
Пире асăрхамаççĕ-ха çаплах.
Эпир, çамрăккисем, тен, юлхаврах,
Тен, вĕренсе пыратпăр юларах,
Чунсем кăна, тен, пирĕн шутсăр шух?

Устав пĕлетпĕр,— тĕрĕсле, паллаш,
Кашни туслашнă автомачĕпе.
Хама илсессĕн, халăх ячĕпе
Постра эп тăрăп шанчăклă, чипер,—
Шансам пире эс, командир юлташ!

* * *

Пур тавралăх шăпчĕ
Лăпкă ирхине.
Пырса ларчĕ шăпчăк
Танк башни çине.

Ларчĕ, пăхкаларĕ
Вăл енчен енне,
Савăнса шăратрĕ
Хӳхĕм кĕввине.

Салтаксем канаççĕ.
Тутлă тĕлĕкре
Пурте халь кураççĕ
Юрлакан хĕре.

## *САЛТАК ÇЫРĂВĔ*

Пахчара кăвак кĕрен
Çеçкене ларать сирень.
Савнă тусăм, эп сана
Асилетĕп кунсерен.

Чикĕре патвар тăма
Патăм эп кăçал сăмах.
Юнашар çӳрет ялан
Вут чĕлхеллĕ автомат.

Херлĕ çăлтăр, ик пакун,
Кăкăрта — çунатлă чун.
Çĕршыва чипер сыхла —
Салтаксен çапла саккун.

Çавал шывĕ хĕрринче
Шурă çĕмĕрт айĕнче
Асилен-ши эс мана
Çурхи ăшă каçсенче?

* * *

Пике салтак юррипеле
Вăранчĕ ыйхăран.
Патвар взводсем йĕркипеле
Тухаççĕ хуларан.

Çĕркаç анчах ефрейторпа
Кайсаччĕ уçăлма.
Паян ав вĕсене труба
Чĕнет инçе çула.

Чупа савăнтаран хăват
Куçать урампала.
Иртен-çӳрен сума сăвать,
Пăхать ăш куçпала.

Пикен те тапхăр-тапхăррăн
Сиксе илет чĕри:
«Ефрейторăм, ефрейторăм,
Чипер çӳре, юри?»

* * *

Каятпăр эрнере пĕрре
Шефри ача садне.
Чĕвĕлтисем хавас пире,
Хăйсен хăнисене.

— Салтак пичче, çут çăлтăрна
Параймăн-ши мана?
— Тепре кала-ха, старшина,
Леш шўтлĕ юмахна.

Хай, мăйăхли, çиçет йăл-йăл
Халап пуçланăçем.
...Эп шутламан нихçан та вăл
Кулма пĕлет тесе.

## *ВИÇЕ ПУÇАНА*

Вĕренӳ шăв-шавĕ вĕçленсессĕн,
Полигон лăпланнă самантра
Мĕнле шӳт, мĕнле халап илтместĕн
Саперсем таран палаткăра.

Юррисем инçе-инçе вĕçеççĕ,
Йышăн вĕсене эс, тăванъен.
Кам çыру çырать: салтак пичечĕ
Хĕрупраçшăн хаклă ыттинчен.

Пухăнма команда пулмаллаччĕ,
Каймаллаччĕ хурала ирччен.
Автоматлă, штыклă ушкăн каччă
Калаçатчĕ савнисем çинчен.

— Хут урлах дояркăпа паллашрăм,
Сăн та ячĕ. Хӳхĕмскер вара,—
Тет Квитко.
— Ак эпĕ те туслашрăм,—
Пĕлтерет Рафик Энгибарян.

...Сăнӳкерчĕкне кăтартнăçемĕн,
Сисрĕç çак туссем вăрттăнлăха.
Пичĕсем хĕрелчĕç: пĕр пикех-мĕн
Вут хыптарнă икĕ салтака.

Акă отделени командирĕ
Таврăнчĕ черетлĕ нарядран.
Хĕр ятне илтсессĕн:—Камăн,—терĕ,—
Куласси пур ман юратуран?

Тĕлĕнтермĕш! Çав хĕрех сержантăн
Кăмăлне те çавăрнă хăй май.

Виç сапер ăна ĕненнĕ, шаннă,
Упăн, тен, татах туссем нумай?

Ни кулма, ни тарăхма аптратпăр.
Каярах, пĕрле çырса çыру,
Взвочĕпех алă пусса яратпăр:
«Сан, иккен, чĕрӳ ытла хĕрӳ».

Кунта каç ăйăн те сисĕнмерĕ
Кăтра хумлă Днепр хĕрринче.
Тен, пĕрер эрне те иртеймерĕ,—
Хут илетпĕр Шуршăл хĕрĕнчен.

Хуравлать Улиççĕ: «Май килсессĕн
Çырăттăм, туссем, кашнин патне.
Юратап сире эп, ма тесессĕн
Юратап мĕнпур Совет Çарне».

Пуçаналлă пулнă виçĕ каччă
Килчĕç Çĕн Шупашкара кайран.
...Виççĕн пĕр чăваш хĕрне саватчĕç
Кузнецов, Квитко, Энгибарян.

## *ЧЕРЕТРЕ*

Салтак япаликсем сутаççĕ
Инçет гарнизонти ГУМра.
Вăр-вар пике — сап-сарă Ася
Чĕвĕлтетет кăна умра.

Витрина патĕнче тăраççĕ
Вутра шăраннă паттăрсем.
Награда паллисем суйлаççĕ
Полковниксем те майорсем.

Орден-медаль куллен çакаймăн,
Çитет уявсенче çаксан.
Колодка — ку вара сăпайлă,
Ĕçре-мĕнре те чух, аван.

Апа, кăна пама ыйтаççĕ...
Мухтавлă гварди хăйăвне.
Вăшт! çеç илет те чăрсăр Ася,
Хурать ветерансем умне.

Çаврăнкалать васкавлăн питĕ.
Чыслаймĕ çав кашни çынна:
Кирек епле хисеп палли те,
Уншăн пулсан, тавар кăна.

Эх, савăк пурнăç хĕрупраçĕ,
Эс ăнлапаймăн, апăрша,
Кунта ват салтаксем кураççĕ
Асран каймасан пĕлмен вăрçа.

Пĕрин медалĕ — Курск пĕккийĕ,
Вут-хĕмлĕ Сталинград — теприн.

Ĕ орден та çаплах: вăл — Киев,
Вăл — Луккенвальде е Берлин.

Иртнĕ кунсен асаплă çулĕ
Куç умĕнче, чун тĕпĕнче...
Ана хальхи яш-кĕрĕм вулĕ
Кăкăр çинчи хăюсенче.

Эс, Ася, чĕвĕлтет те савăн,
Çаплах тирпейлĕн ту ĕçне.
Пĕлетпĕр: эсĕ те тăхтамăн,
Çĕршыв чĕнсессĕн вут ăшне.

## *КЁТСЕ ИЛСЕН*

Эс таврӑнатӑп салтакран,
Ҫаҫалапа яла ҫитеп.
Чуну хавасланать-ҫке сан,
Савнӑ тусу кётсе илсен.

Килӳ патне эс ҫывхаран,
Ҫалинкке́не хуллен уҫан.
Чуну хавасланать-ҫке сан,
Аннӳ кил хушшинче пулсан.

Эс шинельне хывса ҫакан
Якалнӑ ҫёмёрт ҫекёлрен.
Чуну хавасланать-ҫке сан,
Тантӑшусем пырса кёрсен.

* * *

Эс калаçмарăн та кулмарăн,
Хуллен çеç ала султăн.
Чĕрем çунатчĕ шĕл-кăваррăн...
Эп кайрăм, эсĕ юлтăн.

Вакун кустăрмисем ташларĕç,
Пин çухрăм турĕç пулĕ,
Унтан утса ура тарларĕ —
Инçе салтакăн çулĕ.

Çĕршыв хуралĕнче тăратăп,
Чикке сыхлатăп чыслăн.
Манпа пострa та, походра та
Пĕрлех эс, савнă тусăм.

## *КИЛ ХУШШИНЧЕ*

Варук инке çакать çипуç
Кил хушшинчи кантра çине.
Кĕçех таврăнмалла Кĕркуç
Тăван çартан тăван килне.

Кунтан ялан кăшт иенсе
Ферма иртсе çӳрет Мариç.
— Мариç-и ку? Такам тесе...
— Эп-ха... Тумтир çакатăн-иç...

Кантра çинче — палланă тум,
Унпа вылять халь çил уççи.
Хура костюм, кăвак костюм...
Инçе-инçе çӳрет хуçи.

— Мариç...
— Э?
— Кĕр-ха кунтарах...
Тур пул, Кĕркуç хăй киличчен
Таçта юта эс ан тарах,
Тăхта, ачам, кĕркуннеччен.

— Эй,— тет Мариç,— эп каясси
Алра сикет халь утьăкка...

...Кинпе хунямăш пуласси
Çапла кĕтеççĕ салтака.

* * *

Çуллахи вĕри вĕренӳрен
Таврăнаççĕ хулана полксем.
Тар шăрши калан çитĕнӳре
Кашнинех пайти пур салтаксен.

Сарă тумлă уничесенче
Халăх уяври пекех тăрать.
Çулленех çапла танкистсенчен
Йышăнать вăл хăйне май парад.

Пурте саламлаççĕ. Ветеран
Аллине тытать карттус патне.
Савăк пит-куçра курса пыран
Эс Тăван çĕршывăн хăватне.

Георгинлă-астрăллă çыхха
Ывăтать таçтан пике алли...
Эх, хĕрсем...
Аçта çӳрет-ши халь
Тĕнчене пĕр маншăн çурални?

## *ХĔР-САЛТАКСЕМ*

Уçланкăра кăвак куçпа
Пăхаççĕ ăшшăн çеçпĕлсем.
Хĕрсем кăштах чуна уçма
Тăваççĕ пуç кăшăлĕсем.
Хĕр-салтаксем, хĕр-салтаксем...

Çипуç арчи уçа-уçа
Килте кĕтеççĕ амăшсем.
Вилĕмпеле куçа-куçах
Çӳреççĕ чăрсăр ачисем.
Хĕр-салтаксем, хĕр-салтаксем...

Хаяр вут-çулăм ăшĕнче
Анăçалла васканăçем
Тата инçе, тата инçе
Юлаççĕ хамăр вырăнсем.
Хĕр-салтаксем, хĕр-салтаксем...

Кану сехечĕ вăрăм мар,
Умра — тăшман сукмакĕсем.
Çула тухаççĕ васкавар
Вунсаккăрти шураппасем.
Хĕр-салтаксем, хĕр-салтаксем...

## *ÇУЛÇАЛЛĂ ТУССЕМ*

Посталла эп çирĕппĕн утатăп,
Ик сехет кунта ман тăмалла.
Шăп çӳретĕп, таврана сăнатăп,
Малалла каятăп, каялла.
Сар хĕвел — çурхи кунсен мухтавĕ —
Йăл кулса вылять çут штык çинче.
Чарас çук ăна салтак уставĕ:
Пур тĕнче халь ун ытамĕнче.
Куçăм умĕнчех сараççĕ çулçă
Кĕркунне хам лартнă тирексем.
Тăпăлкка чие те çеçке çурчĕ,
Шур пĕрженчĕк уртрĕç çĕмĕртсем.
Чечекленĕр, ешĕл тусăмсемĕр,
Кӳрĕр пурнăçа чечен илем.
Эпĕ, колхозри пахчаçă евĕр,
Сых ятне çак сукмакпа çӳрем.
Ялта чух та çулленех лартаттăм
Хурăн, улмуççи, йăмра, палан.
Капăрлантăр теттĕм Турикасăм
Кăнтăрти пек ешĕл тумпалан.
Аякран та çывăхăн куратăп
Хамăр килĕн пĕчĕк пахчине.
Емĕт-шухăшра пуçа таятăп
Шурă Шупашкар çăкисене.
Анăçу сунса вĕсем ăсатчăр
Хулари юлташсене ĕçе.
Кунтисем, эпир, таса та хатăр
Пурнăçлăпăр хамăр тивĕçе.
Тамăк пек асаплă вăрçă-харçă
Йывăçшăн та, çыншăн та пĕрех.
Çавăнпа салтак пекех тăраççĕ
Çулçăллă туссем те чикĕре.



# ЮРАТУ СУКМАКĔ

* * *

Иксĕмĕре, телейлĕ мăшăра,
Пиллерĕç ваттисем те, тантăшсем те.
Пĕрре эп хĕпĕртерĕм ăшăмра,
Тепре сана вĕçертесрен шиклентĕм.

Туй лаши пек ĕрĕхтерет кунçул,
Ана çăварлăхлаймăн çав, чараймăн.
Çулталăк иртрĕ.
Иккĕ...
Вунă çул...
Чун тĕпĕнче çаплах çав туйăм манăн.

Эс, çумăмри пĕркенчĕклĕ пикем,
Çиле хăюллăн авăсан çунатăм,
Кĕрхи кикак шуракăшĕ пекех
Таçта вĕçсе каяссăн туйăнатăн...

## *АН ЯТЛА, АППАÇĂМ*

Мĕскер, аппа, мĕскер, аппа,
Қалатăн эс паçăртанпах,
Ытла хаваслăн йăл кулан,
Сассу каять сан ян та ян!

Анчах та эп сана илтместĕп,
Тĕтреллĕ умăнти пĕвÿ те,
Çаплах акатуйра çÿретĕп,
Çаплах, çаплах çунать ман питĕм.

Қиле килме тухас чухне
Эп куртăм кÿршĕ ял хĕрне,
Ана пĕлеттĕм унчченех,
Паян тем тиврĕ чĕрене:

Хĕр куллине ытараймарăм,
Сассипеле тăранаймарăм,
Вăрттăнлăхне ăнланаймарăм,
Қалаçнăçем... çухалтăм кайрăм.

Аппа, аппаçăм, ан ятла:
Çÿрет шух чунăм ют ялта.

## *ЮРАТУ*

Ыйтрăм эп тӳпери хĕвелрен:
— Юратать-ши мана чун савни?
Тăхтасам, терĕ вăл, ан кӳрен,
Эпĕ калăп сана ыран ир.

Вăл систерчĕ мана ирхине
Вăрттăн çеç чун савни ĕмĕтне:
«Юратать, юратать, юратать,
Туйăмне палăртмашкăн тăхтать.
Вăл сана, вăйпитти йĕкĕте,
Еçлеме тухасса пит кĕтет...»

Эп ĕçлерĕм тара ӳкиччен,
Халăхра ырă ят илтиччен.

Ыйтрăм эпĕ тулли уйăхран:
— Юратать-ши мана чун савни?
Тăхтасам, терĕ вăл, ан хурлан,
Паллă пулĕ хĕр мĕн шутлани.

Тулли уйăх мана каçхинех
Пĕлтерейрĕ савни ĕмĕтне:
«Юратать, юратать, юратать,
Туйăмне палăртмашкăн тăхтать.
Вăл сана, уçă сас-йĕкĕте,
Вăйăра юрласса пит кĕтет...»

Юррăма эп шăратрăм ирччен,
Шăпчăксем шăпланса лариччен.

Ыйтрăм эпĕ хирти чечекрен:
— Юратать-ши мана чун савни?

Ахалех, тет, сӑнна ӳкерен,
Эсӗ, тет, сарпике суйлани.
Юратать вӑл сана, юратать,
Туйӑмне пӗлтерме вӑтанать.
Вӑл килсеччӗ, тет, хӑй те кунта,
Ман кӳрше, тет, тӗпчерӗ чунтан...
Тат пире, тат часрах, кӑшӑл ту,
Кӗҫӗртен пӗтмелле ырату.
Кӗҫӗртен пуҫланать юрату,
Ан вӗҫерт, тет, ҫавнах мӑшӑр ту...

* * *

Ан тăк, чиеçĕм, çеçкÿне,
Илем кÿреймĕн пахчана.
Ан тăк, пикеçĕм, куççульне,
Тин çавăраймăн каччăна.

Ăна эс ман, ăна эс ман,
Тек ан çÿре çак вырăна.
Шăнкăрчпала çерçи нихçан
Лараяс çук пĕр йăвана.

Текех ан ÿкĕн, сарпикем,
Янраттăр урама куллу.
Урăх çулпа çÿрет иккен
Сан пурнăçри ăраскалу.

* * *

Пултаран, Марине, пултаран,
Кашни çын чĕрине
Вĕçтеретĕн эс пĕлĕт таран,
Антаран çĕр çине.

Эй, ташшу сан, шуракăш ташши,
Пĕр чечен, пĕр хивре.
Илемӳ — камшăн кĕвĕç тĕшши,
Камшăн — çивчĕ çĕмрен.

Сан çинче çитмĕл куçăн çути
Сапалать вут-хĕмне.
Вылянать çитмĕл каччă тути:
«Марине, Марине...»

* * *

Кĕмĕлпе сăрланă кимĕ евĕр
Çутă уйăх лăпкăн ярăнать.
Кимĕçне ан шырăр, ан тертленĕр,
Пурпĕрех тупаймăр халь ăна.

Ешерен юратăва упрасшăн
Çĕмĕрт уснă шурă çунатне.
Ĕмĕтленнĕ пек каласайманшăн
Çамрăк каччă тарăхать хăйне.

Кĕмĕлпе сăрланă капăр кимĕ
Йăпатасшăн кăмăлсăр каччa:
— Ан кулян, пикӳ сан ӳпкелемĕ,
Ыран каç каллех ларса каçан.



# ШЕТМĔ ШЫВĔ

## *ХĂМЛАÇАСЕН ЮРРИ*

Хура çĕре кăпкалатса,
Кăпкалатса, ачашласа
Хăмла лартса хăвартăмăр,
Çуркуннепе шăвартăмăр.

Ылтăнăмăр,
Хăмламăр, ай-хай,
Çĕклен,
Қашла, ши кай, пи кай.

Шуçăмпала пĕрле тăрса,
Хĕвелпеле пĕрле тухса
Ялпа-йышпа ĕçлерĕмĕр,
Ырма-канма пĕлмерĕмĕр.

Ўсет çип тăрăх явăнса,
Пучах çумне пучах хушса.
Пуйса пырать колхозăмăр,
Хăват хушать çĕршывăмăр.

Тăвансене сума суса,
Ырă çынна хисеп туса,
Кăпăкланать хăмла сăри,
Тутанайса пăхсамăр-и?

## *ÇУРТ ТĂВАКАН ЮРРИ*

Çӳллĕ çурт тăватăп эпĕ,
Халиччен пулманнине,
Илĕртен илем кĕртетĕп
Шупашкарăмăр сăнне.

Амăрткайăк пек пăхатăп
Çирĕм иккĕмĕш хутран.
Хĕвеле те, уйăха та
Эп куратăп çывăхран.

Юнашар юхать çут Атăл,
Чуптарать хуллен хумне.
Юррăмпа эп ăсататăп
Çĕн кerменĕн саламне.

Хĕмленсе тухать вăй-халăм
Хавхаланнă чĕремрен.
Ывăнми вылять ик аллăм
Пархатарлă ĕçĕмре.

Çӳлерех кармаш та туртăн,
Кур эс Кремль çăлтăрне.
Ашă çуртăм, капăр çуртăм,
Ырă сыншăн пул парне.

## *ХĂМЛАÇАСЕН ТАКМАКĔСЕМ*

Хăмла пахчи илемлĕ,
Хăмла пулса çитсессĕн.
Колхоз хĕрĕ илемлĕ,
Пĕвĕ ӳссе çитсессĕн.

Çавра кӳлĕ хĕрринче
Тăр шыв ăсаймăпăр-ши,
Хĕрĕх каччă хушшинче
Савни тупаймăпăр-ши?

Симĕс ылтăн пĕрчине
Çилпе вĕçме парас мар,
Бригадăри савнине
Çичĕ юта парас мар.

Улăхри сар чечекне
Вăхăтĕнче татмалла.
Пĕвĕ çитнĕ хĕрсене
Вăхăтĕнче савмалла.

Еçсем хĕрсе пыччăр-и,
Хăмли хаяр пултăр-и,
Кĕркуннепе туй сăри
Чашласа хăпартăр-и!

## *ТУСЛĂХ—БАРАДШАГ*

Эгер çулĕ вăрăм пуль,
Пит инçе пуль терĕмĕр.
Туслăх çулĕ такăр çул —
Çитнине сисмерĕмĕр.

Хушса юрламалли:

Эгер — Шупашкар,
Эгер — Шупашкар,
Туслăх — барадшаг.

Пĕр-пĕрне сума суса,
Ăнланса ал патăмăр.
Тус çумне çĕн тус хушса
Çĕкленет хăватăмăр.

Çутă коммунизма
Йыхăрать малашăмăр.
Ĕмĕрех пĕрле утма
Хевешпа паллашрăмăр.

## *САЛАМЛАТПĂР ХЕВЕША*

Юхаççĕ, юхаççĕ
Атăлпа сенкер Дунай,
Пĕр юрă юрлаççĕ
Тĕл пулма васкана май.

Вĕç эс, юррăмăр, янра.
Пирĕн пилĕмĕр санра.
Саламлатпăр Хевеша,
Çитсе курăр чăваша!

Вĕçеççĕ, вĕçеççĕ
Сарă питлĕ саламсем:
Каллех, ав, чĕнеççĕ
Хăнана пире туссем.

Тăванлăх — яланлăх,
Туслăх ĕмĕр-ĕмĕре.
Ĕçпе ирĕк халăх
Пурнăçа илем кӳрет.

## *ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕН ЮРРИ*

Килсеччĕ вилĕм алăка,
Вилме хушсаччĕ халăха.
Чакмарăмăр эпир,
Тармарăмăр эпир,—
Пуçтартăмăр хала,
Хĕç тытрăмăр алла.

Шăранчĕ тимĕр, çунчĕ шыв...
Салтак пĕтсен — пĕтет çĕршыв.
Пĕтмерĕмĕр эпир,
Çĕтмерĕмĕр эпир,
Шав кайрăмăр мала
Юта аркатмалла.

Хăпсан тăшман асапĕнчен
Пире ыр сунчĕ çур тĕнче.
Çĕнтертĕмĕр эпир,
Пĕрлешрĕмĕр эпир
Пĕр утăмпа утма,
Çĕн пурăнăç тума.

Янтти çине куç хывакан
Каллех пуçне çĕклес пулсан,
Кар тăрăпăр эпир,
Кăтартăпăр эпир
Еçхалăх туслăхне,
Чăн туслăх хăватне.

## *ĂСАТСА ЯР, ТĂВАН*

Тăванăм, тăванăм,
Хĕвел анать.
Антăр-и хĕвелĕ,
Уйăх тухать.

Тăванăм, тăванăм,
Уйăх шăвать.
Йăлтăрти çăлтăра
Ай, ыталать.

Тăванăм, тăванăм
Çумăн ларар,
Савăнса пĕр çавра
Юрă юрлар.

Тăванăм, тăванăм,
Асатса яр.
Çăлтăрсен çутипе
Киле каяр.

Тăванăм, тăванăм,
Тавах сана.
Нихăçан манас çук
Ыр кăмăлна.

## *АН ВАСКА*

Ан васка, пикеҫём, ан васка,
Килелле утмашкăн ан васка.
Чĕрери калас сăмахăма
Эп ёлкĕреймерĕм калама,
Ан васка...

Ан васка, савниҫём, ан васка,
Алăкна уҫмашкăн ан васка,—
Кăшт кăна сăнна пăхса илем,
Ҫĕн вăйпа ҫунатланса ҫӳрем,
Ан васка...

Ан васкаччĕ, чунăм, ан васка,
— Сывă пул,—темешкĕн ан васка.
Санпалах пуласшăн ман чĕрем,
Саншăн ҫеҫ вăл тапĕ ĕмĕрех,
Ан васка...

## *ҪАМ-ШИ МĂШĂР ПУЛАССИ*

Хĕрлĕ çĕрçĕн тутăр
Хĕрĕн пуçĕнче...
Темшĕн эп хăюсăр
Вăйă картинче,
Темшĕн эпĕ çеç хăюсăр
Вăйă картинче.
Амăртса ташлаççĕ
Харсăр таптăшсем —
Уншăнах çунаççĕ
Шухă каччăсем,
Уншăнах хыпса çунаççĕ
Шухă каччăсем.
Вăл хаваслă, савăк,—
Такмаклать, шӳтлет,
Ман каллех пĕр авăк
Чун кӳтсе килет,
Кĕвĕçсе каллех пĕр авăк
Чун кӳтсе килет.
Шăнкăрти шыв юхнăн
Ян каять сасси.
«Хăш каччи-ши унăн
Мăшăр пуласси?»
Ах, пĕлесчĕ: «Ҫам-ши унăн
Мăшăр пуласси?»
Вăйăра тек юлмăп
Тус-тантăшсенчен,
Ҫĕнĕ юрă юрлăп
Хам савни çинчен —
Пурпĕрех ăна эп калăп
Юратни çинчен.

## *НИҪАМА ТА АН ҪАЛА*

Йăрăс хурăн, ешĕл хурăн,
Симĕс тутăр, шур кĕпе.
Укаланнă улăх урлă
Эпĕ утрăм савнипе.

Эпĕ утрăм савнипе
Юрату сукмакĕпе.
Хурăн, сисрĕн пулмалла —
Никама та ан кала.

Тăрă Шетмĕ, хумлă Шетмĕ,
Кĕмĕл карлăклă кĕпер.
Чун-чĕрешĕн каç кĕске-мĕн —
Ир ирлерĕмĕр эпир.

Эпĕ каçрăм савнипе
Юрату кĕперĕпе.
Шетмĕ, илтрĕн пулмалла —
Никама та ан кала.

Çĕнĕ уйăх çӳл тӳпешĕн —
Ылтăн тĕслĕ куç харши.
Çак телейлĕ каç мĕскершĕн
Вăрăмрах пулмарĕ-ши?

Эп калаçрăм савнипе
Юрату сăмахĕпе.
Уйăх, куртăн пулмалла —
Никама та ан кала.

## *ЕМĔР САККИ САРЛАКА*

Ырри ыртарнăччĕ сана,
Чипер сăнра телей шыракана.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Каллех шаккатăн манăн алăка,—
Ĕмĕр сакки сарлака.

Ĕлĕкхи пек куçу кулмасть...
Памарĕç-им унта пылпа кулач,
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха,
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха?
Ĕмĕр сакки сарлака.

Йăву та, ачусем те çук,
Хăв пепкӳсемшĕн пултăн эс куккук.
Нихçан иртми, теепттĕн яшлăха,
Нихçан иртми, теепттĕн яшлăха...
Ĕмĕр сакки сарлака.

Çурхи шыв пек юхать кунçул,
Çавăрăнса килмешкĕн çук ун çул.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Каллех шаккатăн манăн алăка...
Ĕмĕр сакки сарлака.

## *МĂШĂР КĂВАКАРЧĂН*

Мăшăр кăвакарчăн, лăпкă ирхине
Пырса ларчĕ пирĕн чӳрече çине.
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр паян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

Упраймарăм, тусăм, сан юратăвна,
Халь мĕнле пĕрлештерес-ши ик чуна.
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр паян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

Ĕмĕрех эп усрăп чĕрере ятна,
Юрату чăнах килет пĕрре кăна.
Мăшăр кăвакарчăн тетчĕç-çке ялан,
Мĕншĕн мăшăр мар-ши иксĕмĕр паян?
Мăшăр мар çав иксĕмĕр паян.

*АН МАН, ТĂВАН*

Инçеех те тăван, çывăх тăван,
Çитсе курми çĕрте пире ан ман.
Чăрăш тăрри çине, ай, пăхса ил,
Аякри тăванна, ай, аса ил.

Ураççисем ука, кумми пурçăн,
Виçмесĕрех кĕпе, ай, ан касăр.
Эсир çĕнĕ çĕре, ай, кайнăшăн
Пире манчĕç тесе, ай, ан калăр.

Йăранах та йăран ешĕл сухан,
Чĕрсе çиеймесен, ай, чун чăтмасть.
Пĕр варта-çке выртса ӳснĕ пулсан,
Хыпар илеймесен, кăмăл тулмасть.

Хурама та пĕкĕ эп автартăм
Хура лаша валли, ай, пĕветсе.
Уй хапхинчен тухса юр юрларăм,
Çичĕ ютри тăван илттĕр тесе.

Вĕçен кайăк вĕçсе çитеес çук —
Эп юрлакан юрра илтеес çук.
Асăнта тытмалли, ай, пит нумай,
Аякри тăванна ан манса кай.

## *ШЕТМĔ ШЫВĔ*

Ун чухне эс каçă хыврăн
Шетмĕ урлă çуркунне,
Каçă хыврăн — сыпăнтартăн
Юрату утма çулне.

Шетмĕ шывĕ,
Шетмĕ шывĕ,
Шыв юхать,
Çыран юлать...

Каçсерен каçма аванччĕ
Каçăпа ялтан яла,
Ĕшнере ирччен юрлатчĕç
Шăпчăксем ăмăртмалла.

Халь пĕччен аса илетĕп
Ытарми вăхăтсене,
Шыв хĕрне анса кĕтетĕп
Эс çартан килессине.

## ТУПМАЛЛИ

### *Çĕр çыннисем.*


Улăпсем пурнаççĕ Раççейре . . 4
Аслă çаврăну . . . . . . . . 5
Асату . . . . . . . . . 7
Çу уйăхĕн пĕрремĕш кунĕ . . . 10
Пуш уйăх . . . . . . . . 12
Çĕр çыннисем . . . . . . . . 14
Çĕрлехи çумăр . . . . . . 15
Ялта . . . . . . . . . 17
Пăрçа яшки . . . . . . . . 18
Анне сăмахĕ . . . . . . 20
Таврăну . . . . . . . . 23
«Эп выртап...» . . . . . . 24
«Тăвансемĕр» . . . . . . 25
«Чул палăк лартнă...» . . . 26
Ануш аппа . . . . . . . 27
«Кĕрхи тӳпе — вĕç-хĕрсĕр улăх...» . 28
Çулçăсем . . . . . . . . 29
«И, шыв юхать, шыв шăнкăртатать...» 30
Юрпике тĕррисем . . . . . 31
Тимĕре . . . . . . . . . 32
Мăшăр çунат . . . . . . 34
Бетонçăсем патĕнче . . . . . 36
Пархатар . . . . . . . . 38
Хирти хирĕçӳ . . . . . . . 39
«Йăваш этем ӳсĕрпеле...» . . . 40
«Çĕн пĕркеленчĕк асăрхарăм...» . . 41
Чи кирли . . . . . . . . 42
Туссене . . . . . . . . . 43
Пушанаркă . . . . . . . . 45
Вуниккĕмĕш хутра . . . . . 48
«Шаккатăн, мĕскĕн маятник, шаккатăн...» . . . . . . . . 49
Тĕтре . . . . . . . . . 50
Тинĕс . . . . . . . . . 51
Парнас çинче . . . . . . . 52
Икĕ палăк . . . . . . . . 54
«Вĕç, вĕç, куккук» . . . . . 55
Пурнăçăм-кунçулăм . . . . . 56
Çакă ялта виçĕ кас . . . . . 57
«Чавсипеле хирсе тăрмашакан...» . 58

«Ан пул çил ачи пек вылянчăк...» . 59
Канаш . . . . . . . . 60
«Упраймарĕ упăшки хăйне...» . . 62
«Улăхра пĕччен вĕçен текерлĕк...» . 63
Укçук . . . . . . . . 64
«Сăвă çыртăм, çыртăм — ыртăм...» . 65
«Шап-шурă хут листи умра...» . 66
Тĕлпулу хыççăн . . . . . . 67
Çилхеллĕ юхăм . . . . . . 68

## *Аслă хурал.*

«Танксем лараççĕ ретĕн-ретĕн...» . 70
«Пире нимĕç полкĕ ăсатрĕ...» . . 71
Çур çул кĕçĕннисем . . . . 72
«Пур тавралăх шăпчĕ...» . . . 73
Салтак çырăвĕ . . . . . . 74
«Пике салтак юррилеле...» . . . 75
«Каятпăр эрнере пĕрре...» . . 76
Виçĕ пуçана . . . . . . . 77
Черетре . . . . . . . . 79
Кĕтсе илсен . . . . . . . 81
«Эс калаçмарăн та кулмарăн...» . 82
Кил хушшинче . . . . . . 83
«Çуллахи вĕри вĕренӳрен...» . . 84
Хĕр-салтаксем . . . . . . 85
Çулçăллă туссем . . . . . . 86

## *Юрату сукмакĕ.*

«Иксĕмĕре, телейлĕ мăшăра...» . 88
Ан ятла, аппаçăм . . . . . 89
Юрату . . . . . . . . 90
«Ан тăк, чиеçĕм, çеçкӳне...» . . 92
«Пултаран, Марине, пултаран...» . 93
«Кĕмĕлпе сăрланă кимĕ евĕр...» . 94

## *Шетмĕ шывĕ.*

Хăмлаçăсен юрри . . . . . 96
Çурт тăвакан юрри . . . . . 97
Хăмлаçăсен такмакĕсем . . . 98
Туслăх — Барадшаг . . . . . 99

Саламлатпăр Хевеша . . . . 100
Вăрçă ветеранĕсен юрри . . . 101
Ăсатса яр, тăван . . . . . 102
Ан васка . . . . . . . 103
Çам-ши мăшăр пуласси . . . . 104
Никама та ан кала . . . . 105
Ĕмĕр сакки сарлака . . . . 106
Мăшăр кăвакарчăн . . . . 107
Ан ман, тăван . . . . . . 108
Шетмĕ шывĕ . . . . . . 109

*Юрий Семенович СЕМЕНОВ*

**РЕКА ШАТЬМА**

*Стихи*

*На чувашском языке*

Редактор *В. О. Максимов*
Художник *А. А. Макаров*
Технический редактор *Р. Я. Семёнова*
Корректоры *Н. В. Васильева, Л. Т. Васильева*

НТ 07244. Сдано в набор 6/VI-1976 г. Подписано к печати 13/X-1976 г. Формат 70×90 1/32. Бумага типографская № 2. Физ. п. л. 3,5. Усл. п. л. 4,09. Учетно-изд. л. 3,06. Заказ № 2291. Тираж 1700 экз. Цена 16 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина. 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары. Канашское шоссе, 13.


16 пус.